26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ФЕВРАЛЬ 27 ВЫРСАРНИКУН 41(6536) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем СТРУГИ КРАСНЫЕ чугун çул станцийĕнчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра çаплах наступлени туса пынă, МЕЛЬНИЦЫ, ЛУТОВО, ПЛОЩАНЫ, КВАШЕНКИНА, ГОРКА, КЕБСКО, ГОРИСТА ялĕсене тата ЛАПИНО чугун çул станцине туртса илнĕ.

ДНО хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступление вăйлатса пынă, Ленинград облаçĕнчи ДЕДОВИЧИ район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă. Вĕсен шутĕнче—БОРЗИЛИЦЫ, ЯДРЕЕВО, ДЕМЯЧКА, ШИЛИНКА АРБУЗОВА, КРАСНАЯ ОСТРОВА, ЗАХОДЫ, СТАРЫЕ ЛИПКИ, ТИМОНОВО, САЖИНО ялĕсем тата БАКАЧ, ДЕДОВИЧИ чугун çул станцийĕсем.

ХОЛМ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, темиçе ял туртса илнĕ. Вĕсен шутĕнче — МЕЖНИК, БАРЛАЕВО, НАВОЛОКИ, ИСАКОВО, ДОРКА, БОРОДИНО, КЛАДОВИЦЫ.

РОГАЧЕВ хулинчен çурçĕтерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, темиçе ял туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă.

Февралĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 24 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 43 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Финсен Або(Турку) хулине тапăнна хыççăн пирĕн каялла хăйсен базисене таврăнман тесе пĕлтернĕ 4 самолет совет территорийĕнчи ытти аэродромсем çине анса ларнă.

* * *

Струги Красные чугун çулĕнчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пĕр соединени чаçĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ. Вĕсем 400 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Пĕр районра пирĕн вунă боец Соколов лейтенант ертсе пынипе [illegible] нимĕçсен пысăк ушкăнне тĕл пулнă. Совет боецĕсем автоматпа персе 40 гитлеровеца вĕлернĕ, 25 нимĕç салтакне тыткăна илнĕ. Пирĕн разведчиксем тепĕр ушкăн нимĕçсен йĕлтĕрçĕсене тĕл пулнă. Разведчиксем гитлеровецсене пĕр ротăна çитиччен пĕтерсе тăкнă, 30 нимĕç салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Дно хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Ленинград облаçĕнчи Дедовичи район центрĕнче чугун çул станцине туртса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем [illegible] 700 [illegible] 7 тупă, 43 пулемет, 16 миномет тата тĕрлĕрен çар хатĕрĕсем тиенĕ 80 лав тытса илнĕ.

* * *

Рогачев хулинчен çурçĕтерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă. Тăшман ку районра пысăк вăйсем куçарса пынă та, контратакăсем туса, хăйĕн çухатнă позицийĕсене каялла туртса илме хăтланнă. Пĕр участокра нимĕçсен пехотипе танкĕсем кун каçа 14 контратака тунă, анчах та вĕсен контратакăсене пурне те сирсе янă. Тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем, [illegible] Кун каçиччен çапăçусенче 2.500 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 13 танк, 40 хир тупи, хăй тĕллĕн çÿрекен 1 тупă, 4 миномет, [illegible] тата стрелоксен хĕçпăшалне нумай, 8000 противотанковăй мина тата инженерла пурлăхăн 2 складне тытса илнĕ. Чылай нимĕç салтакне тыткăна илнĕ.

Рогачев хулишĕн пынă çапăçусенче пирĕн çарсем 6000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 26 танкна хăй тĕллĕн çÿрекен тупă, 86 хир туппи, 56 миномет, 140 автомашина тата 27 бронемашина пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 68 тупă, 88 миномет, 160 пулемет, 2000 винтовкăпа автомат ытла, 80 автомашина, 200 лаша, 8 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 2 тупă, боеприпас складĕ, 8 апат-çимĕç складĕ, 18 радиостанци, 29 вагон боеприпас тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Львов облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ çулпа пыракан нимĕç пехотин колоннине сасартăк атакăланă. Совет патриочĕсем темиçе вунă гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, вĕсен хĕçпăшалне тытса илнĕ. Çав облаçри партизансен тепĕр отрячĕ нимĕçсен гарнизонне аркатса тăкнă, çавăн чухне 46 нимĕç салтакне тата офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. 6 пулемет, 56 автоматпа винтовка, патронсемпе гранатăсем тиенĕ 12 лав тытса илнĕ.

* * *

Корсунь-Шевченковский районĕнче çавăрса илнĕ тăшман çарĕсене пĕтернĕ чухне тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем юлашки кунсенче çак «хурапра» мĕн пулнине каласа параççĕ. [illegible]

Нимĕçсен 57-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 157-мĕш артиллери полкĕн [illegible] дивизионĕнчен тыткăна лекнĕ офицер-наблюдатель Вилли Лейнвебер лейтенант çапла каласа кăтартнă: «Офицерсен [illegible] «хурапра» питĕ начар пулнă. [illegible] эсэсовецсене питĕ курайми пулнă. Гилле панă приказ тăрăх, эсэсовецсен чаçĕсенчи сывă офицерсене самолетсем çине лартса илсе тухрĕç, çав вăхăтрах ытти чаçсенчи йывăр аманнă офицерсене «хурапрах» хăварчĕç. Чи юлашки кун пире вырăссем питĕ хытă тылларĕç. Салтаксем ушкăнĕ-ушкăнĕпе сурăх кĕтĕвĕ пек пĕр енчен тепĕр енне пăтрана-пăтрана чупрĕç, анчах та вĕсем вырăс вут-хĕмĕнчен ниçта та пытанмалăх вырăн тупаймарĕç. Пĕтĕм район нимĕçсен виллисемпе тулса ларчĕ. Йĕри-тавра пăхма та хăрушăччĕ. Çак кун нимĕç командованийĕн авантюришĕн темиçе пин нимĕç салтакĕпе офицерĕ хăйсен пурнăçне çухатрĕç».

Кроса 90.205 çын хутшăннă

Профсоюзпа комсомолăн Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа ирттекен йĕлтĕрлĕ кросне февралĕн 23-мĕшне республикипе 90.205 çын хутшăннă. Вĕсенчен 15.180-шĕ комсомолецсем. Пĕтĕмпе 81.712 çын ГТО тата БГТО нормисене панă. Кроса Шупашкар хулинче — 10.805 çын, Канаш хулинче — 6.400 çын, Хĕрлĕ Чутай районĕнче — 7.809 çын, Çĕмĕрле районĕнче 4.825 çын хутшăннă.

Агротехникăна вĕренеççĕ

КАНАШ. (Телефонпа). Ямапкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозра агрокружок организациленĕ. Вăл кружокра уйхир ĕçĕсен бригадирĕсем, авакансем, сухалакансем, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем пурĕ 32 çын вĕренеççĕ. Кружок занятийĕсем эрнере икĕ хут пулса иртеççĕ. Кружока туллимар вăтам шкул директорĕ А. И. Лобов юлташ ертсе пырать. Кружокра агротехника ыйтăвĕсемпе лекцисем, калаçусем туса ирттернипе пĕрлех, ыйтусемпе ответсен каçĕсем те пулса иртеççĕ. Вĕсемсĕр пуçне кружокра политикăллă ыйтусене те вĕренеççĕ, ку ĕçе колхоз председателĕн заместителĕ И. Кузьмин юлташ ертсе пырать. Вăл иртнĕ занятире СССР Верховный Совечĕн X сессийĕнче Молотов юлташ тунă доклада ăнлантарса панă. Çитес занятире Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă май панă приказа вĕренме хатĕрленеççĕ.

И. В. Сталин ячĕпе тăракан артиллери заводĕнчи рабочисемпе служащисен тата инженерла-техникла работниксен коллективĕ Совет Союзĕнчи мĕнпур заводсемпе фабрикăсен коллективĕсене чĕнсе калани

Совет халăхĕн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă историллĕ докладĕнче совет çыннисем фронта пулăшмашкăн хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçлениие пысăк вырăна хурса хакларĕ.

Халĕ, ылханлă тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерес сехет çывхарса килнĕ вăхăтра, пирĕн завод çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парса тăрас тесе тата вăйлăрах ĕçлеме хатĕр.

Хĕрлĕ Çара апат-çимĕç çителĕклĕ парса тăрас ĕçре социализмлă ялхуçалăх пуринчен те пысăкрах вырăн йышăнса тăрать. Халĕ ялхуçалăх ĕçĕсен хĕрÿллĕ вăхăчĕ çывхарса килет: çуракине хатĕрленмелле, çураки туса ирттермелле. Вăйлă тырпул туса илесси, çапла вара Хĕрлĕ Çарпа халăха апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар çителĕклĕ парса тăрасси нумай енчен çуракине ăнăçлă ирттернинчен, пуринчен те маларах — трактор паркĕ лайăх ĕçленинчен килет.

Пирĕн завод Оборонăн Государственный Комитечĕ Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал туса кăларма панă заданисене ăнăçлăн тата планран ирттерсе пурнăçласа пырать. Вăл, пирĕн çĕршыври ытти нумай заводсем пекех, çуракине хатĕрленес тата ăна ирттерес ĕçре, пуринчен те ытларах — тракторсене, ялхуçалăх машинисене юсас, механизаторсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçре МТС-сене пысăк пулăшу пама пултарать.

Эпир çак ĕçсене тума сăмах паратпăр:

1. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем хатĕрлеме 1944 çулăн пĕрремĕш кварталĕнче панă мĕнпур заказсене срокчен — 1944 çулхи мартăн 15-мĕшĕ тĕлне— пурнăçламалла.

2. Хамăр шефа илнĕ Межевски МТС-ăн тракторĕсене пурне те çураки валли, унтан уборка валли хатĕрлесе хумалла.

3. Шефа илнĕ МТС-ра çураки вăхăтĕнче тата уборка вăхăтĕнче куçса çÿрекен юсав мастерскойĕсем тумалла, вĕсене квалификациллĕ рабочисем тата инструментсем çителĕклĕ памалла.

4. Шефа илнĕ МТС валли 1944 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне 40 тракторист тата юсакан 10 рабочи вĕрентсе хатĕрлемелле.

Эпир. И. В. Сталин ячĕпе тăракан артиллери заводĕнчи рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем, Совет Союзĕнчи мĕнпур фабрикăсемпе заводсен коллективĕсене 1944 çулта МТС-семпе МТМ-сене шефа илме тата вĕсене колхоз хирĕсенче çураки ирттерес тата тырă пухса кĕртес ĕçре пулăшма чĕнетпĕр.

Завод коллективĕ хушнипе алă пуснă:
Завод директорĕ — ЕЛЯН.
ЦК ВКП(б) парторгĕ—ЛИНЕВ.
Завком председателĕ — БЕЛОПРОСОВ.
ЦК ВЛКСМ комсоргĕ—ГУСЕВ.

Çак обязательствăсене рабочисемпе служащисен тата инженерла-техникла работниксен цехсенчи пухăвĕсенче йышăннă.

Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ

Çак кунсенче парти активĕн Шупашкар хулинчи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухăва ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Ислюков юлташ уçрĕ.

Пуху пĕр ыйту — СССР Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕн ĕçĕсем çинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиум председателĕн, СССР Верховный Совет депутачĕн З. А. Андреева юлташăн докладне сÿтсе-яврĕ.

Андреева юлташ совет парламенчĕн историллĕ сессийĕн ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. СССР Верховный Совет Сессийĕн решенийĕсем, — терĕ Андреева юлташ, — пирĕн çĕршыв ÿсе çирĕпленнине, совет стройĕн хăватне, совет халăхĕсен туслăхĕ çирĕп пулнине тепĕр хут кăтартса пачĕç кăна мар, аслă совет государствине малалла çирĕплетсе пыма çул уçса пачĕç.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн государство экономикăпа финанс тĕлĕшĕнчен те йывăр тĕрĕслеве чыслăн тÿссе ирттерчĕ. Çĕршывăн материальнăй тата финанс ресурсĕсене питех те кĕске срокра вăрçă интересĕсене тивĕçтерес май пĕтĕçтерсе йĕркеленĕ, лайăх ĕçлекен вăрçă хуçалăхне туса хунă, фронт валли хĕçпăшалсем, боеприпассем, снаряженипе апат-çимĕçсем парса тăрассине организациленĕ. 1944 çулхи 249,6 миллиард тенкĕ чухлĕ палăртнă бюджет совет халăхĕ тăшмана çĕмĕрсе тăкас кăмăлпа пурăнни çинчен каласа парать.

Андреева юлташ хăйĕн сăмахĕнче, Чăваш республикинчи предприятисемпе организацисем бюджет умĕнчи обязательствăсене мĕнле пурнăçлаца пыни çинчен тата хуласенче, республикăра финанс ĕçне лайăхлатасси, перекетлĕх режимне çирĕппĕн тытса пырасси çинчен каласа, çав ĕçре пулнă çитменлĕхсене хытă критиклерĕ.

Андреева юлташ малалла бюджета пурнăçа кĕртес ĕçе пирĕн çĕршыври кашни гражданин хутшăннине палăртать. Рабочи фабрикăра, заводра, колхозник колхозра стахановла ĕçлет пулсан, вĕсем государство бюджетне пурнăça кĕртме, бюджетăн доходĕсене ÿстерме пулăшаççĕ. Мĕншĕн тесен производство планĕсене ăнăçлăн тултарни государство бюджетне укçа-тенкĕ вăхăтра парса тăма май парать.

Докладчик Оборона тата Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕсене пĕтĕм союзлă комиссариатсенчен союзлă республикăсен комиссариачĕсем тăвасси çинчен сесси йышăннă законсен историллĕ пĕлтерĕшĕ çинчен каласа парать.

Доклад хыççăн прение 8 çын тухса каларĕ. Прокопьева юлташ (хулари финанс пайĕн заведующийĕ) электростанци начар ĕçленĕ пирки чылай предприятисенче простойсем пулни çинчен, хулари кашни предприятисемпе организацисенче финанс дисциплинисене пăсни çинчен калать.

Бенский юлташ бюджета пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе промышленноçть предприятийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен чарăнса тăрать. Иртнĕ çулта завод коллективĕ 1942 çулхинчен 50 процент ытларах продукци туса кăларнă, 3 миллион тенкĕ укçа перекетленĕ, халĕ коллектив продукци хакне 10—15 процент йÿнетессишĕн, ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн, брака пĕтерессишĕн кĕрешет.

Канатов юлташ предприяти коллективĕ бюджета пурнăçа кĕртес ĕçе мĕнле хутшăнни çинчен каласа парать. Заводра хăшпĕр кирлĕ материалсем енĕпе кăна 2,5 миллион тенкĕ перекетленĕ. Рационализациллĕ сĕнÿсене пурнăça кĕртни çур миллион тенкĕ перекетлеме май панă. Ĕçе мĕнле организациленине пăхса тухни 700.000 тенкĕ перекетлеме, темиçе вунă рабочие урăх вырăна куçарма май панă тата производствăна поточнăй методпа йĕркелени хăшпĕр участоксенче ĕç тухăçлăхне 3—4 хут ÿстерме май панă.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ Золотников юлташ финанс ĕçне лайăхлатасси тата бюджет дисциплинине çирĕппĕн тытса пырасси çинчен чарăнса тăрать.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ И. Иванов юлташ, СССР Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕ йышăннă законсем хамăрăн çĕршывăн тĕрекне татах та хăватлатма май пани çинчен каласа, актива сесси историллĕ решенийĕсене тарăннăн вĕренме чĕнет.

Кун хыççăн прение Аникин ((хула совет исполкомĕн председателĕ), Кудрявцев (60-мĕш номерлĕ перекет кассин заведующийĕ), Кириллова (хула совечĕн çутĕç пайĕн заведующийĕ) юлташсем тухса каларĕç.

Парти активĕн пухăвĕ, СССР Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕ йышăннă решенисене пĕр кăмăлпа ырласа, хулари коммунистсене сесси материалĕсене тата Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа панă приказа тарăннăн вĕренес ĕçе организацилеме, çапла вара столицăри ĕççыннисене фронта ытларах пулăшнă çĕре мобилизацилеме чĕнчĕ.

Парти активĕн пухăвĕнче ВКП(б) Обкомĕн тата хула комитечĕн секретарĕ Чарыков, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Андреев, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Серов юлташсем пулчĕç.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР составĕнче Чурачăк районĕ тăвасси çинчен

1. Чăваш АССР составĕнче Чурачăк районĕ тăвас, унăн центрĕ Чурачăк ялĕнче пулать.

Чурачăк районĕн составне çаксене кĕртес:

Красноармейски районри — Албахтино, Медикасси, Тĕрер, Янчеллă ял совечĕсене тата Именкасси ял советĕнчи Çорткасси, Чăмаш, Шорка ялĕсене; Çĕрпÿ районĕнчи — Тукаль, Вăрманкас-Чурачăк, Йĕкĕрвар, Кушкă, Пĕрремĕш Вăрманкас, Ямаш, Паваркасси, Пысăк Чăрăш, Чурачăк ял совечĕсем; Шăхасан районĕнчи —Высоковка ялсоветне, Дмитриевка ялĕсĕр пуçне, Анат Сурăм, Малти Антаваш, Чуракасси, Шăхаль, Шуркасси ял совечĕсене.

2. Высоковка ял советĕнчи Дмитриевка ялне Шăхасан районĕнчи Энтрияль ялсоветне пăхăнтарас.

Именкасси ял советĕнчи Чăмаш, Шорка, Çорткасси ялĕсене Янчеллă ял советне парас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР составĕнче Муркаш районĕ тăвасси çинчен

Чăваш АССР составĕнче Муркаш районĕ тăвас, унăн центрĕ Муркаш ялĕнче пулать.

Муркаш районĕн составне çаксене кĕртес: Элĕк районĕнчи Матьăк, Панкли, Шĕвĕш тата Йÿçкасси ял совечĕсене; Ишлей районĕнчи — Шурча, Янăш, Оточево, Тивĕш, Хăймалакасси, Шетмĕпуç, Энтимĕркасси, Ямайкасси, Ярапайкасси ял совечĕсене; Сĕнтĕр районĕнчи — Атапай, Кашмаш, Муркаш, Оринино, Пашалукасси тата Çатракасси ял совечĕсене.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ.

Славян воинĕсен митингĕ

Февралĕн 23-мĕшĕпе 24-мĕшĕнче Мускавра славян воинĕсен митингĕ пулса иртнĕ, ăна Мĕнпур славянсен комитечĕ пухнă.

Союзсен çуртĕн Колоннăллă залне Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флотĕн, поляксен корпусĕн, чехословаксен çар чаçĕсен тата Югославин Совет Союзĕнчи çар чаçĕн представителĕсем пухăннă. Митинга вĕсем Отечественнăй вăрçăн мĕнпур фрончĕсенчен пынă, çав фронтсенче вĕсем славян халăхĕсен ĕмĕрхи тăшманĕпе — фашистла нимĕç захватчикĕсемпе хастарлăн та паттăррăн çапăçнă. Зала пухăннă нумай çынсене çапăçури хастарлăхшăн Совет Союзĕн орденĕсемпе медальсем тата союзлă çĕршывсен орденĕсемпе медалĕсем парса наградăланă.

Митинга Мĕнпур славянсен комитечĕн председателĕ Александр Гундоров генерал-лейтенант уçнă.

Митингра çаксем сăмах тухса каланă: Совет Союзĕнчи поляксен 1-мĕш корпусĕн командующийĕ Зигмунд Берлинг генерал, Совет Союзĕнчи Чехословаксен бригадин командирĕ Людвиг Свобода генерал, Совет Союзĕн Геройĕ, гварди подполковникĕ — белорус халăхĕн ывăлĕ Гавриил Половченя, Югославин Совет Союзĕнчи чаçĕн капитанĕ — серб Билютин Першич, католик ксендзĕ — поляксен 1-мĕш корпусĕн капелланĕ, Францишек Купш, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ — украина халăхĕн хастарлă ывăлĕ Александр Молодчий майор, Югославин Совет Союзĕнчи çар чаçĕн командирĕ Марко Месич подполковник, подводнăй лодкăн командирĕ— Совет Союзĕн Геройĕ 2-мĕш рангри капитан Николай Лунин, Карпат Украинин общество деятелĕ—Мĕнпур славянсен комитечĕн членĕ Иван Турянница, Хĕрлĕ Çарăн генерал-майорĕ — Совет Союзĕн Геройĕ Тимофей Шкрылев тата ыттисем те.

Митингра пулнă славян воинĕсем Верховный Главнокомандующие Иосиф Виссарионович Сталин Маршала, Великобританин премьер-министрне Уинстон Черчилле, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президентне Франклин Рузвельта, Чехословаки республикин президентне Эдуард Бенеш доктора тата Югослави халăхне ирĕке кăларасшăн кĕрешекен çарăн главнокомандующине Иосиф Броз-Тито маршала саламсем янă.

Митинг ячĕпе Совет Союзĕнче, Великобританире, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче, Австралире, Канадăра тата Уругвайра пурăнакан славянсен общество организацийĕсенчен саламлă телеграммăсем нумай килнĕ.

Митингра пулнисем юлашкинчен мĕнпур славян халăхĕсене чĕнсе калакан çыру йышăннă (ТАСС).

Предприятисенчи çамрăксен канашлăвĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Кунта районри предприятисемпе промартельсенчи комсомолецсемпе çамрăксен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура çамрăксен Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи задачисем çинчен ВКП(б) райкомĕн промышленность енĕпе ĕçлекен секретарĕ Волков юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик тата тухса калакансем те районри предприятисемпе артельсенче çамрăксен патриотла туйăмĕ ÿссе пыни çинчен, фронтпа çĕршыва пулăшас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлени çинчен каласа пачĕç. Комбинатри цехсенче фронтовой бригадăсен йышĕ ÿссех пырать. Юлашки уйăхра кăна унта çĕнĕрен 15 фронтовой бригада организациленĕ. Вĕсем кашниех хăйсен нормисене 180—250-шар процент тултараççĕ. Костинпа Лопашов бригадисем уйăхсеренех задание икĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Вĕсен бригадисенчи кашни рабочи икшер çыншăн ĕçлет. Индпошив коллективĕ январь уйăхĕнчи плана 130 процент тултарнă. Çамрăк стахановецсем Манохина, Вайнберг тата ыттисем те икшер çыншăн ĕçлеççĕ.

Анчах çамрăксене пур çĕрте те ĕçлеме кирлĕ условисем туса паман-ха. Уйрăмăнах артельсенчи çамрăксем хушшинче ĕçлессине хакламаççĕ. Чылай артельсенче («Красный Октябрь», «Партизан», «Лесоруб») çамрăксен фронтовой бригадисене те организацилемен. Унта политикăллă воспитани парас ыйту çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ.

Канашлу пур предприятисемпе артельсенче те комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисем тумаллине, кашни рабочин пĕрер çамрăка квалификацилле вĕрентсе çитерме кирлине палăртса хăварчĕ. Фронтовиксен ачисене пулăшас тĕлĕшпе çитес кунсенчех икĕ хутчен ятарласа воскресник ирттерме палăртрĕ.

Канашлура пулнă комсомолецсемпе çамрăксем районри предприятисемпе артельсенчи çамрăксене малашне тата тухăçлăрах ĕçлеме чĕнсе çыру çырчĕç.

Çураки валли чуркăсем хатĕрлеççĕ

ЙЕПРЕÇ. «Красный металлист» колхозра кăçал çураки вăхăтĕнче газогенераторлă тракторсем ĕçлемелле. Çавăнпа та кунта халĕ чуркăсем хатĕрлес ĕç хĕрсех пырать. 110 кубометр вутта касса колхоза турттарнă. Кашни кунах 6—7 кубометр вакласа татаççĕ. Уйрăмăнах 1-мĕш бригада (бригадирĕ М. Романов юлташ) лайăх ĕçлет. Вăл бригада 15 кубометр ытла хатĕрленĕ. Чуркă хатĕрлекенсем А. Пудовкина, А. Касьянова, В. Гордеева, А. Рыжова юлташсем икшерĕн ĕçлесе кашни куна 2,5 кубометр ытла татаççĕ. Колхозниксем фронтовой уйăхлăхăн малтанхи вунă кунĕнче чуркă татса пĕтĕрсе, лайăх типĕтсе, амбарсене пухса хума тăрăшаççĕ. Колхоз чуркă хатĕрленипе пĕрлех 5 тонна ытла краççин турттарса килнĕ.

Çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăхра «Красный металлист» колхоз членĕсем кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

П. КУРАКОВ.

Çуракине хатĕрленмелли фронтовой уйăхлăх

Колхозниксемпе колхозницăсем, пурте фронтовой уйăхлăха хутшăнар, вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине большевикла кĕтсе илер!

Тата пикенерех ĕçлемелле

ОКТЯБРЬСКОЕ. Паратчакки ялсоветĕнчи «Красное Сормово» колхозра çуракине хĕрсех хатĕрленеççĕ. Çитес çуракинче акмалли 276 центнер вăрлăха тĕплĕн сортласа хунă. Вăрлăх сортлас ĕçре А. Николаева, А. Соловьева фронтовик арăмĕсем стахановла ĕçлерĕç. Вăрлăх мĕнле усраннине бригадирсем тата колхоз председателĕ П. Сергеева юлташ тĕрĕслесех тăраççĕ.

Çуракинче кирлĕ ялхуçалăх инвентарьне: 23 плуг, 3 сеялка, 23 сÿре юсаса лартнă.

Колхозра ĕçлекен лашасем — 33. Лашасене конюхсем лайăх пăхаççĕ. Аслă конюх А. Филиппова лашасене конюхсем мĕнле çитернипе шăварнине тĕрĕслесех тăрать. Кашни лаша валли ут таврашĕсем çителĕклĕ. Халĕ колхозра урапасем юсаççĕ. Паянхи куна 33 урапа юсанă.

Уя кашни кунах 15—17 лав тислĕк кăлараççĕ. Тислĕке çураки пуçланиччченех хире кăларса тăраççĕ. Вырăнти удобренисем пухас тĕлĕшпе ĕç çителĕксĕр пырать-ха. Бригадирсем кун пирки ответлăха туйса ĕçлемеççĕ. Çак енĕпе фронтовой уйăхлăхра пикенерех ĕçлесе тататăклă улшăнусем тунн кирлĕ.

И. АНДРЕЕВ.

Удобренисем пухаççĕ

ШĂХАСАН. Тури Сурăмри «Заря» колхоз, иртнĕ çулта вырăнти удобренисемпе анлăн та тĕрĕс усă курса, тухăçлă тырпул туса илчĕ. Кашни гектартан вăтам шутпа 21 центнер сурхи тулă, 17 центнер урпа, 14 центнер ыраш тухнă.

Çакна шута илсе, кунта кăçал та вырăнти удобренисем пухас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Пĕтĕмпе 32 центнер кĕл, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 26 центнер фекали пухнă, уя 250 лав тислĕк кăларнă, 127 гектар çинче юр тытнă.

Удобренисем пухас тĕлĕшпе уйрăмах вăрçă инваличĕ П. Дмитриев ертсе пыракан 1-мĕш бригада малта пырать. Вăл бригада 18 центнер фекали пухнă, 22 гектар çинче юр тытнă.

Колхоз çуракине хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăхсене сортланă. Плугсем юсавлă. Машинăсемпе лаша таврашĕсене те çак кунсенчех юсаса, сĕнĕрен туса çитереççĕ.

С. АСЛАН.

* * *

ИШЛЕЙ. Василькасси ялсоветне кĕрекен «Депутат» колхозра пионерсемпе шкул ачисем канмалли кун 10 центнер кĕл тата 3 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç.

Çак ĕçре уйрăмах Л. Пушкин тата Ан. Борисов юлташсем аван ĕçленине палăртмалла.

А. СОЛОВЬЕВ.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуршăл ялсоветне кĕрекен «Çĕнĕ ял» колхоз çуракине хĕрÿллĕ хатĕрленет. Вăрлăхсем çителĕклĕ, машинăсемпе плугсене юсанă. Халĕ вырăнти удобренисем пухас ĕç ăнăçлăн пырать. Февраль уйăхĕнче кунта 850 лав тислĕк кăларнă. Ку ĕçре кашни кун 10 лаша ĕçлет. 30 центнер кĕл, 22 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ.

И. ФИРСОВ.

Малта пыракан колхозра

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Красное Сормово» колхозăн çураки валли вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене тасатса, кирлĕ пек кондицие çитернĕ, таса та типĕ амбарсене хунă. Вăрлăха колхоз председателĕ Осипов юлташ тата бригадирсем вичĕ кунта пĕрре тĕрĕслесех тăраççĕ.

Çурхи тырăсене кунта пĕтĕмпех машинăсемпе акма шутлаççĕ. Акмалли машинăсене пурне те юсанă, вĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн акакансем çумне çирĕплетнĕ. Машинăпа акакансем хăйсен ĕçне лайăх пĕлеççĕ.

—Кăçал тырăсене пĕтĕмпех яровизацилесе тата протравливани туса акатпăр,—тет Осипов юлташ. Яровизаторсене уйăрнă, вĕсене çав ĕçе тĕплĕн вĕрентнĕ.

Ыраш калчисене юр айĕнчен тухсанах апатлантарма хатĕрленеççĕ. Çак ĕç валли 100 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата 300 центнер фекали хатĕрлесе хунă. Тырăсене апатлантарнă чухне кирлĕ пичкесемпе каткасем те çителĕклĕ

Колхозра тислĕке уя тăкас тĕлĕшпе те аван ĕçлеççĕ. Вырăнти удобренисене пухса уя кăлармалли уйăхлăхра 2.000 лав ытла тислĕк кăларнă, ку ĕç халĕ те хĕрсех пырать. 180 гектар çинче юр тытнă.

Колхоз тимĕрçи Филиппов юлташ мухтава тивĕçлĕ ĕçлет. Вăл 47 плуг, 4 сеялка, пĕр молотилка юсанă. Ун ĕçĕн пахалăхĕ те аван. Филиппов юлташ кăçал Павлов колхознике тимĕрçе вĕрентрĕ.

Колхозри лашасем тĕреклĕ, вĕсене пăхакансем хăйсен ĕçне юратса тăваççĕ. Лаша апачĕ çителĕклĕ. Фронтовой уйăхлăхра колхозниксем çураки ĕçне мĕнле хатĕрленнине тепĕр хут тĕрĕслесе тухаççĕ.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

Кăçал иртнĕ çулхинчен нумай лайăхрах ĕçлетпĕр

Иртнĕ çул пирĕн колхоз планпа пăхнă 113 гектар вырăнне 20 лашапах 130 гектар акса хăварчĕ. Колхозниксен пахчисене те хутшăнтарсан, кашни ĕç лаши шуçне 10 гектар ытла çĕр тивет. Çĕртме тăвас ĕç вăраха тăсăлма пултарнине кура, эпир колхозăн темиçе çул ĕçсĕр выртнă тракторне те ĕçлемелле турăмăр. Ку тĕлĕшпе колхоз трактористчĕ фронтовик И. Никитин лайăх ĕçлерĕ.

Иртнĕ çул эпир районра пуринчен малтан тырпул пухса кĕртрĕмĕр, азăн çапса пĕтертĕмĕр, государствăна кĕске срокрах тырă парса татрăмăр. Пирĕн колхоз республикăри Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕ.

Фермăсене комплектласа çитерсе, вĕсем валли хуралтăсем тата апатсимĕç çителĕклĕ таран хатĕрлесе хăварнă.

Çапла вара 1943 çулта эпир малта пыракан колхозсен шутне кĕтĕмĕр. Кăçал, 1944 çулта, эпир пĕлтĕрхинчен нумай лайăхрах ĕçлесшĕн: вăрлăхсене хывса тасатса çитернĕ, ялхуçалăх машинисене йăлтах юсаса хунă; ут таврашĕсем юсавлă та çителĕклĕ; лашасем мăнтăр.

Кăçал эпир тырпул тухăçлăхне ÿстерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлетпĕр: бригадирсенчен кашни пиншер лав тислĕк, 30-шер центнер кĕл, 10-шар центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса, уя кăларассишĕн кĕрешет.

Ака-сухара ĕçлеме уйăрса хунă çынсенчен агротехкружок организацилесе, 8 заняти ирттерне, унсăр пуçне фермăра ĕçлекенсене зоотехкружокра вĕрентетпĕр. Тислĕк, кĕл пухас çĕрте кÿлме вĕренмнĕ 8 вăкăрпа усă куратпăр.

Иртнĕ 1943 çулта эпир пахча-çимĕç, тымар-çимĕçсем туса илес ĕçе хакламан пулнă. Кăçал çак пахата, тупăшлă ĕçе хисеплĕ вырăна лартасшăн. Вĕсем валли вăрлăх тупса çитернĕ, çуркуннеччен çимĕçсем акса шăтарма пĕр парник тăватпăр, çимĕçсем патĕнче ĕçлекенсене вĕрентме уйрăм кружок тунă.

Кăçалхи çуракинче пирĕн 165 гектар акса хăвармалла. Иртнĕ çулхинчен ĕç нумайрах пулать. Анчах кăçалхи çуракине пĕлтĕрхинчен те организованнăрах, кĕскерех срокра, пахатĕслĕхпе ирттерессишĕн пикенсех ĕçлетпĕр.

П. ИГНАТЬЕВ.
Первомайски районри Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Ăмăртса ĕçлеççĕ

ИШЛЕЙ. Папанин ячĕпе тăракан колхозра çуракине хĕрÿллĕн хатĕрленеççĕ. Вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлесе, сортласа, таса амбарсене хунă. Вăрлăха кирлĕ пек астуса тăраççĕ. Плугсене, сÿресене юсаса хунă. Вырăнти удобренисене пухас ĕç те аван пырать. 33 центнер кĕл, 24 центер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Выльăх витисенчи тислĕке хире кăларсах тăраççĕ. 55 гектар çинче юр тытнă.

Папанин ячĕпе тăракан колхоз кăçалхи çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитессишĕн, гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн Андреев ячĕпе тăракан колхозпа социализмлă ăмăртăва тухрĕ. Колхозри бригадăсем, звеносем, уйрăм колхозниксем ăмăртса ĕçлеççĕ.

Н. АМУРЦЕВ.

Шкул ачисем юр тытаççĕ

ÇĔРПУ. Вăрманкас ялсоветĕнчи «Красный Восток» колхозри пионерсемпе шкул ачисем час-часах уя юр тытма тухаççĕ. Пĕррехинче вĕсем пр пуçласа каçчен ĕçлесе, икĕ кун хушшинче 50 гектар çинче юр тытнă.

Ют çĕршывсенче

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Анцио плацдармĕ районĕнче тăшманăн икĕ атакине сирсе янă, тăшмана сухатусем кÿнĕ. 5-мĕш арми главнăй фронтĕнче тата Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче разведка тăвакан чаçсем тата артиллери активлă кĕрешнĕ.

Ĕнер «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксен соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Регенсбургри (Германи) авиаци завочĕсене атакăланă. Йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Загреб хулинчи аэродромне, Пара тата Шибеник порчĕсене (Югослави) атакăланă. Çавăн пекех тата тăшманăн ытти чылай объекчĕсене те атакăланă.

ЛОНДОН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче Анцио районĕнче чылай вырăнсенче тытăçусем пула-пула иртнĕ. Ытти участоксенче патрульсем кĕрешнĕ.

Авиаци çаплах тăшманăн çар об'ектчĕсене тапăннă, çавăн пекех тата Югослави çыранĕсем çывăхĕнче тата Ливорнăран кăнтăртарахра тăшманăн суту-илÿ суднисене те тапăннă. Ĕнер сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 36 самолетне персе ÿкернĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем тĕп фронтра тата Анцио патĕнчи кĕпер умĕнчи укрепленисем çинче хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Тăшман икĕ атака тунă: пĕри тĕп фронтра, иккĕшĕ Анцио районĕнче. Вил ĕ атакине те сирсе янă. Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче чылай вырăнсенче тăшманпа тытăça-тытăça илнĕ. Тăшмана сухатусем кÿнĕ. Тыткăна илнисем пур. Пур фронтсенче те патрульсем кĕрешнĕ.

Февралĕн 24-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ тăшманăн Фабрика ди Ромари (Вăтам Итали) аэродромне, Югослави çыранĕсенчи тата Италин хĕвеланăç çыранĕнчи объектсене тапăннă.

ЯПОНИ ФЛОЧĔ 1943 ÇУЛТА ТУНĂ ÇУХАТУСЕМ СИНЧЕН РУЗВЕЛЬТ КАЛАНИ

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран илнĕ хыпарсем тăрăх çапла пĕлтерет: «Президент Рузвельт çапла каланă: 1944 çулта США-н тинĕс-çар вăйĕсем Лăпкă океанра японецсенне пĕр пин транспорт суднипе баржине ытла путарнă, тенĕ».

АРГЕНТИНА ПРЕЗИДЕНЧĔ РАМЕРЕС ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Буэнос-Айресран пĕлтернĕ тăрăх, Аргентина президенчĕ Рамерес генерал Аргентина халăхне хăй вырăнтан тухни çинчен пĕлтернĕ. Рамерес çапла каланă: государствăна ертсе пырас ĕçе эпĕ республикăн вице-президенчĕ пулса тăракан бригаднăй генерал Эдельмиро Фаррель аллине патăм, тенĕ.

Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă май панă приказа ют çĕршывсенчи пичет анлăн сарнă

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. Сталин Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă май панă приказа Америкăри радио анлăн сарнă. Америка хаçачĕсем приказа курăнмалли вырăнта пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат Сталин юлташăн приказне çакăн пек ят парса кăларнă: «Нацистсем хăйсем туртса илнĕ çĕрĕн 75 процентне çухатнă». «Нью-Йорк таймс» хаçат приказа çапла ят парса кăларнă: «Тăшман пĕтессине Сталин лайăх курса тăрать, нимĕçсем оккупацилленĕ территорин 75 процентне ирĕке кăларнă. Нацистсен ĕçĕсем шанчăксăр».

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. Сталин Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă май кăларнă приказа Лондонри радио темиçе чĕлхепе те радио тăрăх сарнă. Англири пур хаçатсем те çав приказра каланине тата приказри уйрăм тĕлсене курăнмалли вырăнсенче пичетлесе кăларнă.

Бельфастра Англи тинĕс-çар министрĕ тухса калани

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Тинĕс-çар министрĕ Александер Бельфастра (Çурçĕр Ирланди) Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă май сăмах тухса каланă.

«Паян эпир Хĕрлĕ çарăн паттăр ĕççĕсене паллă тăватпăр,—тенĕ Александер.—Вырăс фронтĕнче пĕлтĕр çак кун тĕлне пулнă лару-тăрупа паянхи лару-тăру хушшинчи уйрăмлăх совет çарĕпе сывлăш çар вăйĕсен хастарлăхне пуринчен те лайăхрах кăтартса паратъ». Хĕрлĕ Çар иртнĕ çулталăк хушшинче çĕнтерсе пыни синчен каласан, Александер малалла çапла каланă: «Совет Союзĕн çĕр çинчи армийĕсемпе сывлăшри вăйĕсен çав чаплă çĕнтерĕвĕсене эпир саламлатпăр. Совет правительствине тата мĕнпур совет гражданĕсене чунтан-чĕререн саламласа, эпир вĕсене çитес çулчи пысăк çитĕнÿсем тума сунатпăр», тенĕ

ХĔРЛĔ ÇАР 26 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ МАЙ БОЛТОНРА МИТИНГ ПУЛНĂ

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă май Болтонра (Ланкашир) пысăк митинг пулса иртнĕ.

США конгресĕн налогсем пирки йышăннă законопроектне чарса лартнă

ВАШИНГТОН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Президент Рузвельт февралĕн 22-мĕшĕнче конгресăн налогсем пирки йышăннă законопроектне чарса лартнă.

Рузвельт хăйĕн конгреса янă посланийĕнче çапла каланă: эпĕ хысна тупăшне 10,5 миллиард доллар ÿстермелли закон йышăнма ыйтрăм. «Мана пăхса тухма панă законопроект напи тупăшне икĕ миллиард çурă ытларах кăна ÿстерме пултартать. Анчах çак законопроект хысна тупăшне тĕрĕссипе пĕр миллиард доллартан та сахалтарах ÿстерет».

Рузвельт малалла çапла каланă: «Конгресс йышăннă законопроект налогсем хурасси çинчен йышăннă законопроект мар, налогран хăтармалли законопроект пулса тăрать тата вăл налог тÿлессинчен начар пурăнакансене мар, пуян çынсене хăтарать». Рузвельт хăйĕн посланийĕнче налог тÿлемелли закон çав тери йывăррине хытă критиклет. Çав законсене,—тет Рузвельт, — налог тÿлекен темиçе миллион çын «аслă математикăна вĕренмесĕр» ăнланса илейрес çук, тет. Паян представительсен палатинче законопроекта чарса лартнине сÿтсе-явса сасăлаççĕ пулмалла. Иртнĕ эрнере правительствăна, сутуçăсене укçан пулăшса, хаксене контрольлесе тăма чаракан законопроекта та çирĕплетменччĕ.

США-н ПРЕДСТАВИТЕЛЬСЕН ПАЛАТИ НАЛОГСЕМ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНОПРОЕКТА ÇĔНĔРЕН ЫРЛАНĂ

ВАШИНГТОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер США-н представительсен палати налогсем çинчен калакан законопроекта çĕнĕрен ырланă. Президент çав законопроекта чарса лартса, ăна февралĕн 22-мĕшĕнче представительсен палатине каялла тавăрса панă. Халĕ çав законопроектшăн представительсен палатинче 299 сасă панă, хирĕç 25 сасă пулнă.

АМЕРИКА САМОЛЕЧĔСЕМ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: февралĕн 25-мĕшĕнче американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, американецсен тата акăлчансен истребителĕсем хÿтĕлесе пынипе, Регенсбургри авиаци заводне, Штуттгартри шарикоподшипниксем тăвакан завода тата кăнтăр-хĕвеланăç Германири ытти объектсене те атакăланă. Ку объектсем пурте Германи территорийĕн шалти районĕсенче. Регенсбург хулине тапăнма самолетсен 1100 миля ытла вĕçсе каймалла пулнă. Летчиксем каланă тăрăх, тапăну ăнăçлăн иртнĕ.

Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем ĕнтĕ 5 кун Германин авиаци завочĕсене тапăнса бомбăсем пăрахаççĕ.

НИМĔÇСЕН ТУРЦИРИ «ТЮРКИШЕ ПОСТ» ЯТЛĂ ХАÇАТНЕ ХУПНИ

АНКАРА, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен Стамбул хулинче тухса тăракан «Тюркише пост» ятлă хаçатне хупнă. Çав хаçата Турци влаçĕсем Англин Турцири посольстви çине тăрса сĕннипе хупнă. Хаçатра Великобритани королĕнчен мăшкăлласа карикатура пичетлесе кăларнă пулнă.

Суйлавçăсем панă наказсене чыслăн пурнăçа кĕртмелле

А. АНДРЕЕВА
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ

Пирĕн республикăра февралĕн 1-мĕшĕпе мартăн 1-мĕшĕ хушшинче политикăллă пысăк кампани — ялсовет депутачĕсен отчечĕсем пыраççĕ. Суйлавçăсем умĕнче ялсовет депутачĕсемпе пĕрле ялсовет председателĕсем те отчетсем туса параççĕ. Ялсовет депутачĕсен отчечĕсем депутатсен тата ялсоветсен ĕçĕнчи мĕнпур çитменлĕхсене уçса палăртма, ялсовет ĕçĕсене лайăхлатма, пĕтĕм колхозниксене вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине тĕплĕн хатĕрленсе ăнăçлăн ирттернĕ çĕре мобилизацилеме пулăшмалла.

Депутат вăл—государство деятелĕ, çавăнпа та унăн хăйĕн суйлавçăсем умĕнчи ответлăхне яланах туйса тămалла. Сталин юлташ çапла каланă: «Депутат çакна пĕлме тивĕç: вăл халăх тарçи... унăн хăйне халăх панă наказ тăрăх тытмалла».

Вăрçă ялсовет ĕçĕсен условийĕсене чылаях улăштарчĕ, ялсоветсен ĕçĕ пысăкланчĕ, çав вăхăтрах депутатсен йышĕ чакрĕ. Депутатсенчен нумайĕшĕсем алла хĕçпăшал тытса, Сталинла Конституцире çырса çирĕплетнĕ правăсене хÿтĕлеме фронта тухса кайрĕç. Теприсем тăшмана çĕнтерме хĕçпăшал туптама производствăсемпе строительствăсене кайнă.

Вăрçă тылри ялсовет депутачĕсене пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçлеме хушрĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем халĕ хăйсен ĕççĕсене чыслăн туса пыраççĕ.

Етĕрне районĕнчи Иваньково ялĕнче отчетлă пухура малтанах М. И. Дегтярев депутат отчет туса панă. Вăл çапла каланă: «Мана депутата суйласа эсир ман çине пысăк шанăç хутăр. Çав шанăçа пурнăçа кĕртес тесе, эпĕ хушнă пĕтĕм ĕççене чыслăн пурнăçлатăп, пĕрмаях ĕçĕн йывăр участокĕсенче пулма тăрăшатăп». Суйлавçăсем вăл лайăх ĕçленине пĕркăмăллăн палăртнă.

Ишлей районĕнчи Вăрман Сюктер ялсоветĕнчи суйлавçăсем М. А. Федорова депутат ĕçĕсене лайăх хак панă. Вăл ялсовет çумĕнчи культурăпа сутĕç енĕпе ĕçлекен яланлăх комисси председателĕ тата бюджет комисси членĕ пулнă, çав комиссисен ĕçне лайăхлатма пулăшнă, хуçалăхпа политикăллă кампанисене ирттернĕ çĕрте активлăн хутшăнса ĕçленĕ.

Отчетла пухусем политика тĕлĕшĕнчен çÿллĕ пусăмра иртеççĕ. Отчетлă пухусенче хĕрарăмсем 80 процент ытла пулаççĕ.

Отчетлă пухусем Шупашкар районĕнчи Хыркасси тата Сарапайкасси ялсоветĕсенче уйрăмăнах активлăн иртнĕ. Хыркасси ялĕнче пулса иртнĕ отчетлă пухура ялти 123 суйлавçăран 112-шĕ пулнă. Пухура пĕр депутатăн тата ялсовет председателĕн Максимов юлташăн отчечĕсене итленĕ хыççăн 25 ыйту панă. Суйлавçăсем, ялсоветăн пĕтĕм ĕçĕсене тĕплĕн тишкерсе, çивĕччĕн критикленĕ. Суйлавçă А. Егорова юлташ ялсовет вулав çурчĕсен ĕçне çителĕксĕр тĕрĕслени çинчен каланă. Вулав çурчĕ плансăр ĕçлет, ялти культурăллă центр пулса тăман. Малалла Егорова юлташ, писмоносец хаçат-журналсене тата çырусене йĕркеллĕ тăратманнине палăртса, вăл ĕçе лайăхлатма сĕннĕ.

Шупашкар районĕнчи Шоркка ялсоветĕнчи суйлавçăсем ялсовет председателĕн Чуваков юлташăн ĕçне тĕрĕс критикленĕ. Вĕсем ялсовет председательне шкулсене начар юсанăшăн, шкулсене вутă хатĕрлесе паманшăн тата шкулсенче вĕретнĕ шыв пулманшăн, ачасене шкула çÿреттерес ыйту çине ответсăр пăхнăшăн тата колхозсенче ĕç дисциплинине вăйлатас тĕлĕшпе сÿрĕк ĕçленĕшĕн критикленĕ. Суйлавçăсем ялсовет председательне асăннă çитменлĕхсене пĕтерме, яла илемлетес, çар çыннисен çемьисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес, фронта пулăшас тата вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине хатĕрленес ĕççене татăклăнах лайăхлатма хушса хăварнă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Çĕньялта пулса иртнĕ отчетлă пухура суйлавçăсем трахомăран сыватакан пункт начар ĕçленине палăртнă. Ишлей районĕнчи Ишек ялсоветĕнчи суйлавçăсем, депутатсен ĕçне хытă критиклесе, ялсовет исполкомĕн ларăвĕсене вăхăтра ирттерме, ялсовет çумĕнчи ялан ĕçлекен комиссисен ĕçне лайăхлатма хушса хăварнă.

Отчетлă пухусенче ялсоветсен колхозсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатма кирли çинчен нумай калаççĕ. Шупашкар районĕнчи Хыркасси ялĕнче пулса иртнĕ пухура колхозница К. Пахомова çапла каланă: «Ялхуçалăх артелĕн уставĕ колхозниксем тунă мĕнпур ĕçкунĕсене ĕç кĕнекисем çине эрнере пĕр хут çырса тăма хушать. Пирĕн колхозра ун пек тумаççĕ, ĕçкунĕсене ĕç кĕнеки çине икĕ виçĕ уйăхра та çырмаççĕ. Эпир, хĕрарăмсем, çуллахи вăхăтра пĕрмаях ĕçлерĕмĕр, анчах миçе ĕçкунĕ туннне пĕлместпĕр. Ялсовет председателĕ çав ĕçпе интересленмен, вăл колхоз председателĕсенчен ялхуçалăх артелĕн уставне çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма ыйтман». Ялсовет государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшман тата колхозниксен ĕçне кирлĕ пек тĕрĕслесе пыман.

Ишлей районĕнчи Кипечкасси ялсоветĕнчи отчетлă пухура колхозсене ертсе пырас тата фронтовиксен çемьисене пулăшас енĕпе ялсовет исполкомĕн ĕçĕнче пулнă пысăк çитменлĕхсене палăртнă. Колхоз тырпулсене уйхиртен вăхăтра пуçтарса кĕртмен, 10 гектар сĕлле вырнă чух тăкаксем нумай тунă, çĕрулмине шăнтса янă.

Советски районри Анатри Сĕнтĕр ялĕнче пулса иртнĕ отчетлă пухура суйлавçăсем колхоз ĕçне хытă критикленĕ. Вĕсем иртнĕ çулта çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пулнă йăнăшсене кăçал пĕтерме кирлине палăртнă. Колхозра лашасене начар пăхаççĕ. Пухура выльăх апачĕсене салатса яни çинчен калакан фактсене тăрă шыв çине кăларнă. Çапла государствăна тырă сутнă вăхăтра Çĕмĕрлене тырă леçме каякан колхозниксем лашасем валли панă сĕлле хăйсем илнĕ.

Отчетлă пухусене ирттерни суйлавçăсем хушшинче çĕнĕ производствăллă çĕкленÿ пуçарма пулăшрĕ. Вĕсем халĕ çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ытларах вăй хурса ĕçлеме тытăнчĕç. Ишек ялсоветĕнче отчетлă пуху хыççăн ялсовет исполкомĕн ларăвне ирттернĕ. Унта ялан ĕçлекен комиссисен членĕсене тата актива чĕннĕ. Çав ларура суйлавçăсем панă наказсем çинчен сÿтсе-явса, малашне мĕнле ĕçлемеллине палăртнă. Виçĕ колхозра çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухнă. Çакăн хыççăн çуракине хатĕрленесси чылаях лайăхланнă. Уя удобренисем турттарассине хăвăртлатнă, кĕске срокрах вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ, 45 плуг, 47 урапа, 6 веялка, 44 сÿре юсанă.

Ишлей районĕнчи Кипечкасси ялсоветĕнче февралĕн малтанхи 15 кунĕ хушшинче уя 4515 лав тислĕк кăларнă, кĕл тата ытти удобренисем 100 центнер пухнă, вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ, 40 плуг, 30 комплект ут таврашĕсем юсанă. Красноармейски районра отчетлă кампани пуçланнăранпа укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă, укçа-тенкĕ пухмалли пĕррĕмĕш кварталти плана 68,5 процент тултарнă. Советски районри Этмень ялĕнче отчетлă пуху иртнĕ хыççăн тепĕр куннех ялхуçалăх машинисене юсама тимĕрçĕ патне илсе кайнă тата кантăр вăрри, пăрçа йышши тырăсене сортлама тытăннă.

Асăннă фактсем ĕнтĕ республикăри районсенчен нумайĕшĕсем ялсовет депутачĕсен тата ялсовет председателĕсен отчечĕсене ирттерес тĕлĕшпе лайăх ĕçлени çинчен калаççĕ. Анчах та уйрăм районсенче (Канаш, Йĕпреç, Шăмăршă, Первомайски, Тăвай районĕсенче) отчетлă пухусене ирттерессине кая хăварса пыраççĕ. Канаш районĕнче отчетлă пухусене вăхăтра ирттерменни те пулнă. Февралĕн 24-мĕшĕ тĕлне унта депутатсемпе ялсовет председателĕсем отчетсем хатĕрлесе çитермен пирки 6 ялта пухусем ирттермен. Тăвай районĕнче отчетлă пухусене февралĕн 22-мĕшĕ тĕлне туса ирттерме палăртнă. Анчах февралĕн 24-мĕшĕ тĕлне те 7 ялта отчетсем ирттермен. Первомайски районра отчетлă пухусем 4 ялсоветра, Шăмăршă районĕнче 4 ялсоветра ирттермен.

Ялсовет депутачĕсен тата ялсовет председателĕсен отчечĕсене ирттерес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле, отчетлă пухусене пур ялсоветсенче те ирттерес пулать. Отчетлă пухусене мĕнпур суйлавçăсене явăçтармалла.

СССР Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕ пирĕн умма пысăк задачăсем лартрĕ. Сесси йышăннă закон халăхран укçа-тенкĕ пухас ĕçе, çуракине хатĕрленес ĕçе лайăхлатма тата шкулсемпе больницăсен, вулав çурчĕсен ĕçне çĕклеме хушать. Ялсоветсен суйлавçăсем панă наказсен кашни пунктне тĕплĕн вĕренсе, вĕсене пурнăçа кĕртес енĕпе çак сывăх вăхăтрах мĕнле ĕçсем туса ирттермеллине палăртмалла. Суйлавçăсем панă пĕр сĕнÿ те пурнăçа кĕмесĕр юлмалла мар. Ялсовет ĕçне лайăхлатас тесен, ялсовет çумĕнчи ялан ĕçлекен комиссисен ĕçне çĕклемелле, ялти актива ĕçе анлăнрах явăçтармалла. Отчетлă пухусем пулса иртнĕ хыççăн пирĕн республикăра начар ĕçлекен пĕр ялсовет та пулмалла мар.

Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă кун панă приказ Чăваш республикинчи ĕççыннисене хастарлăнрах ĕçлеме хаваслантарчĕ. Ялсоветсен кулленхи тивĕçĕ—колхозлă ялти патриотла çĕкленĕве пуçарса пырса, вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине тĕплĕн хатĕрленесси тата Хĕрлĕ Çара пулăшу парса тăрассипе ÿстерсех пырасси пулать.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.100 экз.

НТ 00049